# Вера АРХИПОВА:
# Вăйлă çынсемпе ĕçлесе вăйланса пыратăп



Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ÿкерчĕкĕ

*«Алла кĕнеке тытсанах чун уçлăха вĕçнĕн туйăнать», – терĕ Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Вера Архипова.*

**– Камшăн та пулин кĕнеке чун апачĕ кăна пулсан, сирĕншĕн вăл професси пулса тăнă. Вера Севастьяновна, эсир кĕнекене хăçан юратма пуçланă?**

– Анне Ольга Александровна Çĕмĕрле районĕнчи Юманай шкулĕнче – чăваш чĕлхи, атте Севастиан Михайлович вырăс чĕлхи вĕрентнĕ. Пирĕн килте библиотека питĕ пуян пулнă. Атте ăçта кайнă – пур çĕртен те кĕнеке туянса килнĕ. Шкул ачисем кăна мар, ял çыннисем те пирĕн пата кĕнеке илме килетчĕç. Пушкин, Лермонтов, Достоевский произведенийĕсене ачаран илтнĕ. Чăваш классикĕсен хайлавĕсемпе пĕчĕкрен паллашнă. Пирĕн пата çыравçăсем те йышлăн хăнана килнĕ. Атте Александр Артемьевпа туслă пулнă. Çавăнтан пуçланнă та ĕнтĕ кĕнекене юратасси...

**– Пурнăça библиотека ĕçĕпе çыхăнтарас шухăш хăçан çуралчĕ тата?**

– Библиотекăра ĕçлекенсем маншăн яланах чи ăслă çынсем шутланнă. Кĕнеке хушшинче пурнăçне ирттерекенсем, тĕрĕссипе, урăхла пулмаççĕ те. Шкул пĕтерсен аттепе анне Хусана ăсатса ячĕç. Хусан патшалăх культура институтне вĕренме кĕтĕм. Атăл тăрăхĕнчи регионсем валли специалистсене хатĕрлекен аслă шкулта вĕренме питĕ интереслĕччĕ. Преподавательсем питĕ пысăк шайри специалистсемччĕ. Ленин ячĕллĕ библиотекăран вара тухма та пĕлмен. Каталогсем тăрăх кирлĕ кăларăма шырани паянхи кун та куç умĕнчех. Унти кĕнекесем çинчи тусан шăрши халĕ те сăмсана кăтăклать.

**– Сирĕн, лайăх вĕреннĕ пилĕк студент шутĕнчи специалистăн, ĕç вырăнне суйлама ирĕк пулнă. Эсир вара Шупашкара килнĕ, ахаль библиографра ĕçлеме пуçланă...**

– Мана карьера илĕртмен. Хама шанса панă тивĕçе пахалăхлă тăвассишĕн тăрăшнă. Диплом илсен мана Йошкар-Олари библиотека тытăмне ертсе пыма ярасшăнччĕ. Хваттер параççĕ, шалу пысăк... Анчах манăн Шупашкарах килмелле. Вакансисен спискокĕнче ача-пăча библиотекине шыраса тупрăм, унта каяссине пĕлтертĕм. Çакна пĕлсен декан ятлама пуçларĕ: «Вера Архиповăна Шупашкара тĕп библиографа кайса лартсан... Эпир мĕне вĕрентетпĕр? Пирĕн патран пулас пуçлăхсем тухаççĕ!» Юлашкинчен çапах та килĕшрĕç. Хытах ÿкĕтлерĕм пулмалла çав. Çапла вара Шупашкарта ачасемпе ĕçлеме пуçларăм. Питĕ интереслĕччĕ. Вĕсен хăйсен чĕлхи, тавра курăмĕ... Вунă çул сисĕнмесĕр иртрĕ. Çак тапхăрта пиçсе çитрĕм-ши? Аслăрах çынсемпе ĕçлес килчĕ. Вара Наци библиотекине куçрăм.

## ПИРĔН КИЛТЕ БИБЛИОТЕКА ПИТĔ ПУЯН ПУЛНĂ. АТТЕ ĂÇТА КАЙНĂ – ПУР ÇĔРТЕН ТЕ КĔНЕКЕ ТУЯНСА КИЛНĔ

**– Наци библиотеки – наука шайĕнче ĕçлекен учреждени. Ĕçе кĕрсе кайма йывăр пулмарĕ-и?**

– Ун чухне юсав ĕçĕсем пынăран библиотекăна Чăваш патшалăх филармонине куçарнăччĕ. Пай ертÿçи Ольга Илларионова: «Акă сана компьютер. Акă «А» сас палли. Праски Витти пирки мультимедиа дискĕ хатĕрле», – терĕ. Виçĕ сăмах – виççĕшĕ те маншăн ют. Пĕтрĕм! Мĕнле çăрăлса тухас? Çакăн пекех шухăшсемпе ĕçе пикентĕм. Праски Виттипе кайса паллашрăмăр. Телее, питĕ çăмăл çын вăл. Тĕнче тăрăх çÿренĕскер темĕн те пĕлет, такама та паллать. Кампа кăна çыру çÿрĕтмен тата. Питĕ интереслĕ, професси енĕпе вăйлă аталаннă çын... Пĕр-пĕр статуэткăна тытать те уф! вĕрет. Тусан вĕçет. «Кăна çавăнта панă», – тет. Эпĕ çырса хуратăп. «Ещĕксене пăх-ха», – малалла хушать вăл мана. Унта вара темĕн те пур. Питĕ нумай картина тата. Вĕсене йĕркелесе тухрăмăр. Тĕрĕссипе, унăн библиографĕ пулса тăтăм. Ун патне маларах библиотека енĕпе никам та пырса кĕмен. Тăрăшни сая каймарĕ. Диск хатĕрлерĕмĕр. Вăл Раççей Президенчĕн грантне çĕнсе илме пултарчĕ. Кайран электрон кăларăм нумай хатĕрлерĕмĕр. Ку енĕпе хавхалантарса пыраканни искусствоведени докторĕ Михаил Кондратьев пулчĕ. Филипп Лукина, Анисим Асламаса, Виктор Ходяшева, Степан Максимова, ыттисене халалланă электрон кăларăмсем кун çути курчĕç. Анисим Асламаспа ĕçлеме уйрăмах кăсăклă пулчĕ. Унăн çемйипе çав вăхăтра туслашрăмăр, Чехипе тачă çыхăнусем йĕркеленчĕç. Хĕрĕсем Татьяна, Евгения музыка училищинче вĕрентеççĕ. Алексей библиотекăна килсех çÿренĕ. Унăн мăшăрĕ Инна Игоревна та, икĕ ачи те – музыкантсем. Тĕлĕнмелле ун пек çынсенчен. Çав вăхăтрах мăнаçланмалла та. Вĕсем Европăри пысăк сценăсем çинче чăваш кĕввине янраттараççĕ вĕт.)

**– Эсир – Чăваш наци конгресĕн хастар членĕ те. Культура комитетне ертсе пыратăр. Чăвашлăх ĕçне туса пыма мĕн хавхалантарать?**

– Атте-аннен тĕслĕхĕ. Вĕсем яланах халăхпа, халăх хушшинче пулнă. Пурнăçĕ вĕрене тăнă. Анне фольклор ушкăнне ертсе пынă. Халĕ чăваш тумĕ хатĕрлеме ансат. Лавккара капăрлăхсене ăсталама кирлĕ япаласене темĕн те туянма пулать. Анне вара ĕç урокĕсенче консерв банкисенчен касса тутаратчĕ. Каçхине аннепе клуба каяттăмăр. Ял халăхĕ туллиех пухăнатчĕ. Ташлатчĕç, юрлатчĕç. Ял-йыш пĕр çемьери пек туслă пурăннă. Питĕ интереслĕччĕ. Анне мана та концертсене хутшăнтарнă. Анчах эпĕ сцена çине тухма вăтаннă. Мечĕк пек кăлтăр-кăлтăр чупса тухнă та хăвăртрах каялла тарса кĕнĕ. Çынсем эпĕ каланине илтсе те юлайман пуль. Халăх патне туртăнасси çавăнтан пуçланнă ĕнтĕ.

Чăваш наци конгресĕпе çывăхланма мана Зоя Яковлева пулăшрĕ. Маншăн вăл пирĕшти вырăнĕнчех пулчĕ. Ун чухне Степан Максимов пирки фильм ÿкермелле. Эпĕ унччен те ÿнерçĕсем пирки сахал мар фильм хатĕрленĕ-ха. Роза Деменцова: «Сан ĕçÿсем пиçсе çитмен. Пĕр çынпа паллаштаратăп», – терĕ. Зоя Яковлевăн хваттерне илсе кайрĕ. Çавăн хыççăн пĕрле ĕçлеме пуçларăмăр. Унтан Зоя Аркадьевна конгресăн пресс-службине ертсе пычĕ. Пĕррехинче вăл мана Чăваш наци конгресĕн ĕçне хутшăнма сĕнчĕ. Малтанах килĕшмерĕм-ха. Маншăн Наци библиотеки кăна пĕлтерĕшлĕ пулнă, хамăн ĕç-хĕле, пурнăçа унпа кăна çыхăнура курнă. Кайран кĕрсе кайрăм та – конгресс чун апачĕ пулса тăчĕ. Тăван халăхпа пĕрле пулни кăмăла çĕклет, ăс-тăна çивĕчлетет. Йăхташсем пурăнакан тĕрлĕ регионa тухса çÿреме пуçларăмăр. Кампа кăна тĕл пулман-ши çак тапхăрта? Халĕ таçта та çывăх юлташсем пур. «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ят парсан кашни регионти чăваш манпа пĕрле савăннă пек туйăнчĕ. Оренбургран, Красноярскран, Крымран, Севастопольтен, ытти тăрăхран ăшă саламсем вĕçсе çитрĕç. Çакăншăн пĕр вăхăтрах савăнтăм та, тĕлĕнтĕм те.

Чăваш наци конгресĕн культура комитетĕнче – 40 яхăн çын. Вĕсемпе хаваспах ĕçлетĕп. Йышра – хореографсем, юрăçсем, артистсем, ал ĕç ăстисем, çыравçăсем... Тава тивĕçлĕ ят илнисем нумайăн. Вăйлă çынсемпе ĕçлесе хам та вăйланса пыратăп. Культура комитечĕ, тĕрĕссипе, конгресăн культура вучахĕ пулса тăчĕ. Пĕтĕм пысăк ĕçе çак комитет членĕсем пурнăçлаççĕ. Кала кăна вĕсене: кăвакал чĕпписем пек шăпăр-шăпăр пырса лараççĕ. Ĕç хушасса кăна кĕтеççĕ. Акă кăçал Тутарстанри Уява фольклор ушкăнĕсене 1 пин çын илсе кайрăмăр. Кунта та комитет хастарĕсем маттур пулчĕç. Нумаях пулмасть ыр кăмăллăх акцине хутшăнтăмăр. Культура комитечĕн членĕсем пĕр кунра 23 пин тенкĕ пухса пачĕç.

**– Сирĕн «Аваллăха упраса, малашлăха ĕненсе», «Чăваш Енĕн мухтавлă çыннисем», ытти проекта республикăра кăна мар, регион тулашĕнче те лайăх пĕлеççĕ...**

– Комитета ертсе пыма шансанах ĕç-хĕле анлăлатмалли пирки шухăшларăм. Чăваш наци конгресĕ – пĕтĕм чăваша пĕрлештерсе тăракан организаци. Çакна тĕпе хумаллине ăнланса икĕ проект хатĕрлерĕм. «Чăваш Енĕн мухтавлă çыннисем» тата «Чăваш наци конгресĕн уçă вулавĕсем: аваллăха упраса, малашлăха ĕненсе». Вĕсен тĕллевĕ – тăван халăхăн авалхи ырă йăли-йĕркине чĕртсе тăратасси. Проектсене пурнăçланă май районсене, каярахпа регионсене тухса çÿрерĕмĕр. Чи малтан Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăла кайрăмăр. Алевтина Петровна ертсе пыракан «Çăлкуç» коллективпа пĕрлешсе сумлă ĕç хатĕрлерĕмĕр. Тĕрĕссипе, проект Андриян Николаев космонавт çуралса ÿснĕ çĕр çинче пуçланчĕ тесен те юрать. Унтан Комсомольски районне çитрĕмĕр. Унта Владимир Павлов çав тăрăхри туй йăли-йĕркине кăтартса пачĕ. Зоя Аркадьевна фильм ÿкерчĕ.

«Аваллăха упраса, малашлăха ĕненсе» проекта мĕншĕн уçă вулавсем тетпĕр-ха? Мероприятире яланах лектор пур. Вырăнти тавра пĕлÿçĕсемпе малтанах калаçса татăлатпăр. Вĕсем хăйсен тăрăхĕнчи йăла-йĕрке пирки каласа кăтартаççĕ. Çынсем нумайăн пухăнаççĕ, çав енчи йăла-йĕркесене аса илеççĕ. Вĕсене пĕтĕмпех çырса, ÿкерсе илетпĕр. Зоя Аркадьевнăн фончĕ пуянлансах пырать. Унпа усă курма пĕлесчĕ. Материал пухăнса пынă май электрон кăларăм е кĕнеке хатĕрлес шухăш та çирĕпленсе пырать-ха.

«Чăваш Енĕн мухтавлă çыннисем» проект кашни çул пулса пырать. Çыравçăсем енĕпе Литература музейĕпе тачă хутшăнса ĕçлетпĕр. Учреждени ертÿçи Ирина Оленкина – комитет пайташĕ. Кĕнеке куравĕсем, «çавра сĕтелсем» йĕркелетпĕр. Ÿнерçĕсемпе те туслă çыхăну çирĕпленсех пырать. Вĕсем конгреса хăйсен картинисене парнелесси йăлана кĕчĕ. Кĕçех чăн-чăн галерея пулса каять. Унта халĕ Мадуровăн, Даниловăн, Лукияновăн, Рыбкинăн, ыттисен ĕçĕсем упранаççĕ.

Çавăн пекех ЧНКн культура комитечĕ ЧР Культура министерствипе тачă çыхăнса ĕçлет. «Кĕмĕл сасă», «Раççей чăваш пики» конкурс-фестивальсем – пĕрлехи проектсем. Малашлăх тĕллевĕсем пысăк. Кăçал, авă, Телейлĕ ачалăх çулталăкĕ. Ăна ăнăçлă ирттересси пирки шухăшласа пысăк ĕçсем тума палăртрăмăр та ĕнтĕ.

**Валентина БАГАДЕРОВА**